ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЙЫШЁН УЛШĂНĂВЁСЕМ ТАВРА

Иван КУЗНЕЦОВ,
профессор

Чăваш халăхĕ Совет Союзĕнче — йышлă халăхсенчен пĕри. 1970 çулхи перепись тăрăх, пирĕн çĕршывра 1700 пине яхăн чăваш пулнă. 1980 çулхи перепись тĕлне унăн йышĕ икĕ миллион патне çывхармалла. Юлашки переписçе чăвашсен йышĕ Совет Союзĕнче вунвиççĕмĕш вырăн, РСФСРта тăваттăмĕш вырăн йышăннă. Тĕнчери халăхсем икĕ пин чĕлхепе калаçаççĕ пулсан, хăйне уйрăм çырулăхлă халăхсен шучĕ вара пурĕ те икçĕр кăна. Тĕнчери хăшпĕр паттăлăхсенче пурăнакан халăхсен йышĕ чăвашсенчен те сахал.

Ĕлĕкхи саманасенче тĕрлĕ чĕлхеллĕ халăхсем пĕр-пĕринпе питĕ сахал хутшăннă. Иртнĕ ĕмĕрте чăвашсем пурте пекех Европăри Россия территорийĕнче çеç пурăннă. Балтика тăрăхĕпе Кавказа, Вăтам Азие, Украинăпа Белоруссе çĕршывне çара илнĕ чăваш салтакĕсем кăна çитсе курнă. 1875 çулта чăваш халăхĕн 63,9 проценчĕ Хусан кĕпĕрнинче, 17,5 проценчĕ Чĕмпĕр кĕпĕрнинче, 10,7 проценчĕ Самар кĕпĕрнинче, ытти сем Ĕпхŭпе Саратов, Оренбургпа Астрахань кĕпĕрнисенче пурăннă.

Капитализм аталаннăçемĕн чăвашсем çĕнĕ çĕр шыраса Çĕпĕр кĕпĕрнисемпе ытти кĕтессене куçса каяççĕ. Совет влаçĕ хыççăн, çĕршыва индустриализациленĕ çулсенче, чăваш ĕçченĕсем çĕршыври пур облаçсене те çитеççĕ.

1797 çулта чăвашсен йышĕ 329 пин пулнă пулсан, 1897 çулта 844 пине яхăн, 1970 çулта 1694 пин, 1975 çул пуçламăшĕнче 1900 пине çитнĕ. Чăваш республикинче пурăнакан чăвашсемпе республика тулашĕнчи чăвашсен йышĕ (процентпа) çакнашкал улшăнса пынине курма пултаратпăр:

Хăш çулта	Хальхи ЧАССР территорийĕнче	Республика тулашĕнче
1797	70	30
1897	64,3	35,7
1926	59,7	40,3
1939	56,8	43,2
1959	52,4	47,6
1970	50,5	49,5
1. I—1975	50,0	50,0

1975 çулта республикăпа ун тулашĕнчи чăвашсен йышĕ пĕрешкел шайлашрĕ. Çапах та ку факт Чăваш республикинчи чăвашсен йышĕ чакса пынине пĕлтермест, ŭсĕм хăвăртлăхĕ расна пулнине кăна пĕлтерет. Халăх йышĕ мĕнле ŭссе пынине çак цифрăсем яр-уççăн кăтартса параççĕ:

Хăш çулта	Чăваш республикинче	Миçе хут ŭснĕ	Республика тулашĕнче	Миçе хут ŭснĕ	Пурĕ	Миçе хут ŭснĕ
1797	231,1 пин	1,00	98,0 пин	1,00	329,1 пин	1,00
1897	542,4 »	2,35	301,4 »	3,08	843,8 »	2,56
1926	667,7 »	2,89	449,6 »	4,58	1117,3 »	3,40
1939	777,3 »	3,36	592,3 »	6,04	1369,6 »	4,17
1959	770,4 »	3,33	699,4 »	7,14	1469,8 »	4,47
1870	856,2 »	3,70	838,2 »	8,55	1694,4 »	5,15
1975	950,0 »	4,11	950,0 »	9,6	1900,0 »	5,77

Чăваш республикин территорийĕнче мĕн ĕлĕкреннех чăвашсемпе пĕрле вырăссем, тутарсем, ирçеесем пурăннă. Çавăнпа та Чăваш республикинчи халăхсен йышĕ пĕтĕмĕшпе епле ŭссе пынине асăрхар-ха: Чăваш республикинче пурăнакан чăвашсен йышĕ пĕрле пурăнакан ытти халăхсен шайĕнчен кăштах чакса пырать. Çакă вăл республика тулашне чăвашсем ытти халăх çыннисенчен ытларах тухса кайнинчен килет. Çапла вара ЧАССРти халăхсен йышĕ кăштах улшăнчĕ. Ăна тиркес çук. Çав хушăрах вырăссемпе тутарсем тата ытти тĕрлĕ халăх çыннисем те Шупашкарта килĕштерсе пурăнаççĕ.

Халăхсен йышĕ (процентпа):

Хăш çулта	чăвашсем	вырăссем	тутарсем	ирçеесем
1797	78	19,3	1,8	0,9
1859	77,3	18,8	2,7 **	1,2
1897	78,5	16,7 *	2,9	1,9
1926	74,8	20,0	2,5	2,7
1939	72,1	22,6	2,7	2,2
1959	70,2	24,0	2,9	8,2
1970	70,0	24,5	3,0	1,7

Паянхи кун эпир ЧАССР территорийĕнче халăх йышĕ ытти республикăсемпе облаçсенчи халăх йышĕнчен пысăкрах пулнине асăрхатпăр. Халăх йышĕ мĕнле ŭссе пынине (1 кв. км çĕр çинче вăтамран миçе çын шăнăçнине) çак цифрăсенчен куратпăр:

1797—16,3	1933—54,2
1859—24,0	1939—60,7
1897—36,4	1959—61,7
1913—46,5	1970—68,0
1920—49,5	1972—69,0
1928—50,3	1974—70,0

ЧАССР çĕр тăвăрлăхĕ тĕлĕшĕнчен РСФСРта (Мускавпа Тула облаçĕсем хыççăн) виççĕмĕш вырăнта тăрать. Пĕтĕм Совет Союзĕнчи халăх тăнăçлăхĕ вара ЧАССРти халăх йышĕнчен 10 хута яхăн каярах.

Революцичченхи Чăваш çĕршывĕнчи хуласенче пурĕ те халăхăн 4 проценчĕ кăна пурăннă. Хулисем те ун чухне (Шупашкар, Çĕрпŭ, Етĕрне) ялсенчен нумаях уйрăлса тăман. Шупашкарти халăх йышĕ, сăмахран, Пăрачкавринчен те сахал пулнă. 1897 ç. перепись пĕлтернĕ тăрăх, чăвашсем Шупашкарта 9,3 процент, Çĕрпŭре 16,0 процент, Етĕрнере 2,4 процент пурăннă.

1975 çул пуçланнă тĕле ЧАССРти халăх йышĕ 1274 пин çынна çитнĕ. 1970 çулхи перепись хыççăн хула çыннисен йышĕ 36,5 процентран 42,1 процента çити ŭснĕ. Ял çыннисен йышĕ вара 43 пин çынна яхăн чакнă. (Хула çыннисен йышĕ 530 пине яхăн, ял çыннисем 744 пин ытларах пулнă).

1970 çулхи перепись кăтартнă тăрăх, пĕтĕм Совет Союзĕпе илсен чăвашсен 29 проценчĕ (урăхла каласан, çĕр çынтан çирĕм тăххăрăшĕ) хуласенче пурăнать. Чăваш республикинче — 22,5 процент, ытти облаçсенче — 35,6 процент.

Нумаях пулмасть Чăваш республикине колхозниксен республики теме тиветчĕ. Паянхи кун вара пирĕн республикăра рабочисен йышĕ мала тухрĕ. Куна (процентсем тăрăх) çак таблица кăтартать:

	1959 ç.	1970 ç.
Рабочисем	25	48,7
Служащисем	11,4	19,5
Колхозниксем	62,6	31,3

(Итоги Всесоюзной переписи, т. V, 1973, стр. 35)

Чăваш çыннисем Совет Союзĕнче (ăçта тата миçе процент) вырнаçнине 1970 çулхи переписçе çапла кăтартнă:

ЧАССР	—50,5
Тутар АССРĕ	—9,1
Пушкăрт	—7,5
Куйбышев обл.	—6,7
Ульяновск —„—	—4,6
Кемерово —„—	—1,9
Красноярск —„—	—1,7
Оренбург —„—	—1,4
Казах ССРĕ	—1,3
Свердловск обл.	—1,0
Тюмень —„—	—1,0
Саратов —„—	—0,9
Украина ССРĕ	—0,8
Иркутск обл.	—0,8
Пермь обл.	—0,8
Челябинск обл.	—0,7
Новгород —„—	—0,6
Узбек ССРĕ	—0,5
Мари АССРĕ	—0,5
Мускав хули	—0,5
Новосибирск обл.	—0,5
Пенза —„—	—0,4
Коми АССРĕ	—0,4
Томск обл.	—0,4
Мускав —„—	—0,4
Горький —„—	—0,4
Омск —„—	—0,4
Алтай —„—	—0,3

Пĕтĕмĕшпе илсен, чăваш халăхĕн 96,6 проценчĕ РСФСРта пурăнать.

Чăвашсем Совет Союзĕн хăш вырăнĕнче мĕн чухлĕ пурăннине пĕлес тесен çак зонăсене пăхас пулать:

Пĕтĕмĕшпе Вĕсенчен хулара (процентпа):

СССР — 100 проц.	29
РСФСР — 96,6 —„—	27,6
ЧАССРта—50,5 —„—	22,5
РСФСРта (ЧАССРсĕр)—46,1	33,2
СССРта—49,5	32,2

Ку цифрăсем питĕ интереслĕ: чăваш мĕн чухлĕ Чăваш республикинчен катарах, çавăн чухлĕ вăл ытларах хулара пурăнать. РСФСР тулашне тухнисем пуринчен ытларах хула çыннисем (71 процент ытла), пуринчен ытларах— рабочисем (е заводсенче, çĕнĕ стройкăсенче, е совхозсенче). Ку фактсене чĕлхе улшăнăвĕ çинчен каласнă чухне асра тытас пулать.

* * *

Чăваш çыннисем социализм саманинче ытти халăх çыннисемпе кунран-кун хутшăнса пыраççĕ. Çавна май тăван чĕлхепе усă курасси чылай улшăнчĕ. Чăваш çыннисем ытти халăх çыннисемпе пĕрле хутшăнса ĕçленĕ чухне ытларах та ытларах вырăс чĕлхипе усă кураççĕ. Çавăнпа та вырăс мар çынсенчен чылайăшĕ переписçенче хăйсен тăван чĕлхине вырăс чĕлхи тесе кăтартнинчен ним тĕлĕнмелли те çук. Динамикăллă цифрăсем чăвашсем çинчен акă мĕн каласçĕ:

Районсем (облаçсем)	Вырăс чĕлхине тăван чĕлхе вырăнне йышăнакансем (проц.)		
	1926 ç.	1959 ç.	1970 ç.
1. Чăваш республикинче пурăнакан чăвашсем	0,2	2,5	5,5
РСФСРтисем	1,1	8,3	12,0
СССРта пĕтĕмĕшле	1,2	9,0	13,0
РСФСРтисем			
ЧАССРсăр илсен	2,5	15,0	19,1
СССРтисем			
ЧАССРсăр илсен	2,5	16,0	20,6
СССРтисем (РСФСРсăр)	12,6	39,9	40,6
II. Хуласенче пурăнаканнисене уйрăм пăхсан:			
ЧАССР хулисенчи чăвашсем	10,3	15,6	22,0
РСФСР хулинчисем	17,8	27,2	30,8

* Реформа хыççăнхи çулсенче сахал çĕрлĕ хресченсенчен чылайăшĕ аякри çĕрсене куçса кайнă.

** XIX ĕмĕр варринче хăшпĕр чăвашсем тутăра тухнă.

СССР хулинчисем	17,3	28,5	31,9
РСФСРтисем (ЧАССРсĕр)	21,1	33,5	37,4
СССР (ЧАССРсĕр)	19,1	37,4	38,3
СССР (РСФСРсĕр)	13,3	44,4	43,8

Çак тĕслĕхрен эпир акă мĕн куратпăр: чăваш çынни хăй çуралнă кĕтесрен мĕн чухлĕ катарах пурăнать, вырăс чĕлхине вăл çавăн чухлĕ ытларах тăван чĕлхе вырăнне хурса йышăнать.

1970 çулхи переписçре тата çакнашкал цифрăсем палăрнă: вырăс чĕлхине аван пĕлекенсем — ЧАССРта пурăнакан чăвашсем хушшинче 58,3 процент, РСФСРта—58,6, пĕтĕм СССРта — 58,4 процент пулнă. Пĕр шайрах.

Чăвашсем хушшинче тутарла е ирçелле, е урăх чĕлхесемпе калаçакансем те, полиглотсем те (темиçе чĕлхе пĕлекенсем) сахал мар. Вĕсем вара хулара кăна мар, ялта та пур. Темиçе чĕлхе пĕлни вĕсене ĕçре пулăшу кӳрет. Çакă вăл тĕрлĕ халăхсене çывăхлатас ĕçе çăмăллатать. Халăхсен хушшинчи туслăха çирĕплетме пулăшать.

Нацисем туслашса çывăхланнине В. И. Ленин тивĕçлипе пысăк вырăна хунă. Çакă вăл пысăк усăллă процесс пулнине палăртнă. Коммунизм тăвас ĕçре урăхла каласу пулма та пултарайматсть. Çапах хăшпĕр çынсем ку факт çине тиркешсе пăхма хăтланаççĕ. Сăмахран, Г. Н. Волков хăйĕн «Этнопедагогика» ятлă кĕнекинче (1974) ку ыйтăва акă мĕнле ăнлантарать:

«1970 çулхи Пĕтĕм Союзри перепись вăхăтĕнче СССР халăхĕн 94 проценчĕ тăван чĕлхе тесе хăй национальность чĕлхине йышăннă, 6 проценчĕ вара ытти чĕлхесене, пуринчен ытла вырăс чĕлхине йышăннă. Тăван чĕлхе çакнашкал пысăк процентпа упранни КПСС Ленинла нацилле политикин çĕнтерĕвĕ пулать» (365 стр.).

«1970 çулхи Пĕтĕм Союзри перепись итогĕсем кăтартнă тăрăх, 1926 çулхи переписçре регистрациленĕ СССРти халăхсенчен пĕри те, пĕр пĕчĕкçеççĕ кăна пулин те, ассимиляциленмен, çĕтмен» (366 стр.) тет Г. Н. Волков юлташ.

Авторăн çак сăмахĕсем чи малтанах акă мĕн кăтартса параççĕ: 1) Ассимиляци тенĕскер ырă мар япала иккен, КПСС ленинла нацилле политикине тавтапуç, вырăс чĕлхине тăван чĕлхе тесе йышăнакансем пурĕ те 6 процента яхăн кăна; 2) Автор шучĕпе ассимиляци тенĕскер пĕр-пĕр халăх пĕтĕмĕшпех ытти халăхпа (вырăс халăхĕпе) пĕтĕççе çĕтсе кайнине пĕлтерет иккен. СССРта 22 процент ытла мăкшă-ирçе вырăс чĕлхине тăван чĕлхе тесе йышăнни ассимиляциленни пулмасть имĕш. Халĕ ĕнтĕ тĕрлĕ вырăнта пурăнакан чăвашсем хушшинче пулса иртнĕ улшăнусене тимлĕн сăнаса пăхар-аха. 1970 çул пуçламăшĕнче амăш чĕлхине тăван чĕлхе тенисен процентне ăçта пурăннă тăрăх асăрхасан çакна куратпăр:

ЧАССРта	94,5
Çурçĕрте (Архангельск, Магадан областĕсенче, Карели, Коми АССРĕсенче)	65,5
Инçет Хĕвелтухăçĕнче (Приморье, Хабаровск крайĕсем, Амур, Камчатка, Сахалин обл.)	47,3 таран
Сĕпĕрте	74 —„—
Вăтам Азире	67 —„—
Украинăра	44,3
Мускавпа Ленинград областĕсенче	54,5 —„—
Калининград областĕнче	47,5

Чылай областçенчи чăвашсенчен çурри ытла, куртăмăр ĕнтĕ, вырăс чĕлхине тăван чĕлхе вырăнне хураççĕ. Паллах, ку вăл чăваш çынни тăван чĕлхинчен ютшăннине, ăна хисеплеменнине пĕлтермест. Çавăнпа та ку тĕслĕх нихăш чăваша та кӳрентерме е хурлантарма пултараймасть.

Вырăсланса пыракан чăвашсен йышĕ, паллах ĕнтĕ, пур çĕрте те ӳссе пырать. Ку вăл — халăхсем пĕрешкелленсе пынин пысăк палăрăмĕ. Йăла тĕлĕшĕнчен пĕрешкелленесси кирек ăçта та çăмăлтарах та хăвăртрах пулса пырать. Сăмахран, хулара кăна мар, ялта та чăвашсемпе вырăссем хушшинчи кĕпе-тумтир уйрăмлăхĕ юлмарĕпе пĕрех.

Ассимиляци — халăхсем пĕр-пĕрин чĕлхипе йăлине йышăнса пыни — халь тин тапраннă япала мар, вăл мĕн авалтанах пыракан процесс. Анчах та пусмăрлă обществăпа социализм обществинчи ассимиляци хушшинче пысăк уйрăмлăх пур. Социализмченхи саманасенче ассимиляци пусмăр урлă, халăхсене пĕр-пĕринпе ирĕксĕрлетсе пĕрлештерес майпа пулса пынă. Сăмахран, XVIII ĕмĕр варринче хăйне уйрăм тĕнпе пурăнакан чăвашсене (иноверецсене) шыва вăйпа кĕртсе христиан тĕнне йышăнтарнă. Киреметсене кĕлтуса (чӳклесе) пуççапас вырăнне чиркӳсенче е турăшсен умĕнче пуççапас йĕркĕ туса янă. Чăваш чĕлхине хĕсĕрленĕ, тăван чĕлхепе чиркӳ кĕнекисене çеç кăларма ирĕк панă. Украинецсен чĕлхин шăпи те çакнашкалах пулнă. Паллах ĕнтĕ, тĕрлĕ чĕлхеллĕ, тĕрлĕ тĕслĕ халăхсене чукмар вĕççĕн вырăссемпе пĕрлештерни ăнăçлă пулма пултарайман. Хăй вăхăтĕнче Карл Маркс Н. Флеровскин «Положение рабочего класса в России» ятлă кĕнекине вуланă чухне, сăмахран, хăш уездсенче мĕн чухлĕ чăваш пурăннине асăрхаса пырать те çакна палăртса хăварать:

«...Ку национальноçсем (чăвашсемпе марисем — И. К.), чылай ĕмĕр хушши çичĕ ют пусмăрĕнче пурăннă пулин те, хăйсен чĕлхине, хăйсен несĕлне, хăйсен ĕлĕкчи вырăнĕсене упраса хăварма пултарнă. Пĕрин хыççăн тепри тутарсемпе вырăссем нумай ĕмĕр хушши пуç пулнă пулин те, вĕсен йышĕ ку таврари халăхсен пиллĕкмĕш пайĕнчен иртеймен... Инородецсем пур çĕрте те малтанхи пекех палăраççĕ» (146—147 стр.).

Çапла ĕнтĕ, К. Маркс хансемпе патшасен темле ирсĕр хĕсĕрлевĕ те инородецсене пĕтĕçтерме пултарайманнине асăрханă. Г. Н. Волков Совет халăхĕн интернационалистла пĕрлĕхне халăхсем пĕр-пĕринпе юнашарлă çывхарса пынă пек кăна ăнланать: çывхарнăçемĕн пĕрешкелленсе, пĕрпĕтĕмленсе, шăранса пĕтĕççе пынине вăл хапăл тумасть. Ăна вăл чăваш халăхне вырăс халăхĕ çăтса янă пек сăнать. Ун шучĕпе чăваш халăхĕ ĕмĕр-ĕмĕрех, хĕвел сӳнинченех хăйне уйрăм чĕлхеллĕ, уйрăм йăлаллă, уйăм характерлă, хăйне уйрăм тытан наци пулмалла. Епле пулсан та, мĕнле пулсан та чăваш яланах чăвашăнах юлмалла.

Çав идейăна пăхăнса, вăл хăйĕн «Этнопедагогикинче» пур чăвашсем валли никам пăсмалла мар пек несĕп кодексĕ çырать. Тĕпре— пур чăвашсене чăвашлăха вĕрентсе çитĕнтересси, чăвашлăхра пиçĕхтеоесси, чун-чĕрене пĕр пăркаланми чăвашлăха пăхăнтарасси.

Г. Н. Волков «Этнопедагогикинче» чăвашсене икĕ пая уйăрса калаçать: пĕрисем — «чăн чăвашсем», теприсем — чăваш чунне çухатнă суя чăвашсем, ылханăва тивĕç этемсем пулаççĕ, имĕш. Хăтăрса, юнаса, Г. Н. Волков çапла тӳнтерлетсе сăмахлать:—Наци хăйĕн нацилле çул-йĕрне пăрахрĕ, унтан пăрăнчĕ пулсан, вăл каялла каймасса, пуçне çимессе, çĕтмессе этемлĕх пĕр тĕслĕх те кăтартса параймасть» (125 стр.).—Чăн чăваш тенинче,—тет Г. Н. Волков,—çамрăксене вĕрентес тĕллевре нацилле йăласемпе тăван халăх паллисене уйăрма тăрăшмалли палăрса тăрать... Халăх йăлисене уявламасăр, вĕсене шанчăклă пăхăнмасăр тулли хаклă çын пулмасть, пулма та пултарайматсть... (Этнопедагогика чуваш. народа 59 с.).

Асăрхар-ха, автор кунта йăласем тĕрлĕ пулнине те тиркемест, вĕсем пурте юрăхлă, пурте хисеплĕ пулмалла имĕш. Сăмахран, акă вăл ĕлĕкхи «çĕр вăрлас» йăлана та каçса кайсах мухтать.

«Ку йăла, тет вăл, питĕ вирлĕ урок панă. Çĕр вăрланă самантра ăслă ват çынсем... çамрăксене хăйсен чи кирлĕ, чи аслă шухăш-кăмăлне пĕлтернĕ. Ку вăл—çĕре юратни—тăван уй-хирсемпе, улăхсемпе, вăрмансемпе çирĕп çыхăнса тăнă» (276—277 стр.).

Чăвашлăха упрас ĕçре Г. Н. Волков кĕрекене, чи малти вырăна, тăван чĕлхепе пурăннине ларттать, унпа юнашар хăй çуралнă çĕршыва, ентешлĕхе, килĕшлăха, унсăр пуçне чăвашсен ĕлĕкхи йăли-уявĕсене упраса усрама хушать.

Ку нацилле принципсене автор хаярăн законлатса çырать: «Хăйĕн авалхи аслашшĕсен чĕлхине пĕлмен çынна (чăваш) халăх хушшинче мĕскĕн тесе шутланă, çав чĕлхене маннисене — телейсĕр тесе шутланă, çав чĕлхене пĕлесшĕн мара — ухмах теннĕ, юратманнисене— йĕрĕнмелле, ылханмалла çын тесе шутланă» (181 стр.).

Хăй халăхне вĕрентес принцип тăрăх шкулсенче чăвашла вĕренесси кашни чăвашăн тивĕçĕ пулмалла. (Этнопедагогика, 123 стр.).

Автор çапла сĕнсе çырать:

«Тăван чĕлхене, тăван литературăпа историе вĕренесси, тăван традицисемпе йăласене уявласси кашни вĕренекеншĕнех тума май пур япала, Калининградра пурăнать-и вăл, Камчаткăра-и—пурпĕрех». (87 стр.).

Чăваш яшкĕрĕмĕсем, амăшĕсем вĕрентнĕ тăрăх, çапла тупа туса ӳснĕ пулать:

«Авалхи йăлана пăрахмастпăр,
Çĕнĕрен йăла кăлармастпăр»

(Этнопедагогика чуваш. народа. 303, 320 стр.).

Тепĕр тĕлте Г. Н. Волков çапла та хытарса çырса хурать: «Ваттисен йăлисене маннин вачĕ шăттăр!» (Çавăнтах, 226 стр.).

Ячĕшĕн тенĕ пек, хăшпĕр çĕрте автор, коммунизмлă, интернациллĕ вĕрентмелли çинчен те асăнкалать, анчах вăл интернацилине интернационалистлипе пĕр тана хурать, тĕп никĕсре унăн çав-çавах нацилле вĕрентӳ, нацилĕхе çирĕп упрани, ваттисен авалхи йăли-уявĕсене уявлани юлать. Кунпа çеç те мар-ха. Чăвашсене вĕрентме чăваш чунне пĕлни кирлĕ,—тет Г. Н. Волков. Тен, çавна пула-и вара, чăвашсемшĕн чăн вăй паракан воспитани вăл — халăх хăй тата хăй майлă вĕрентни пулать имĕш (Этнопедагогика, 116, 121 стр.). Апла пулсан вара, советла коммунизмлă тĕрĕс воспитани парасси — интернациллĕ воспитани пулать тени айккине тухса ӳкет, мĕншĕн тесен асаннесем ăс пани кăна вăй-хăват парать пулсассăн, ытти мĕне кирлĕ? (86—87 стр.).

Г. Н. Волков çырнисенче тата çак тĕлĕнтермĕшсене куратпăр: «Кашни нацин культура пуянлăхĕсем нацилле ученăйсен, нацилле вĕреннĕ çынсен, пĕтĕм чунĕ-варĕпе тăван халăхĕпе çыхăннă çынсен алли вĕççĕн пулса пымалла» (107 стр.). Ку тĕлте автор Ахундов, Гогебашвили, Абовян, Насыри, Яковлев авторитечĕсем çине таянма хăтланать. Анчах, асăннă çынсем чăн та çапла шутланă теес пулсан та, XX-мĕш ĕмĕр варринче пурăнакан совет педагогĕ Г. Н. Волковăн мĕнле çавнашкал нацилле питрĕнчĕк калаçмалла-ха?

Шел пулин те, çапла сăмахлани пĕр çĕрте кăна мар тĕл пулать. Сăмахран, вăл çакна ĕнентерме тăрăшать:

Социализм саманинче ĕнтĕ «пирвай пуçласа нацилле хăйне уйрăм пулни этемлĕх интернацилле аталанăвĕн никĕсĕпе тĕпекĕ пулса тăрать» (Этноп. чув. народа, 327 стр.).

МАНĂН ЯТ

Нина АРТЕМЬЕВА

Эпĕ — çамрăклăх.
Парти мана ĕненсе çул пиллерĕ.
Утап çав çулпа эп хăюллăн, хавас.
Вăхăт: «Кунта çĕн завод кирлĕ», — тере,
Пуçланчĕ, çĕкленчĕ КамАЗ!

Нимле машинпа
иртейми тайга витĕр
Выртать малалла ман шăпăм.
Кам паттăр,
хастарлă,
пĕр шиксĕр, вăл килтĕр,
Ансат манăн адрес: БАМ!

Хăватлăн,
нумай пулмасть илтĕнчĕ мар-и:
«Пĕрре-е-мĕш!»
Кунтан тĕлĕнме кирлĕ мар.
Умри пилĕкçуллăхра ыр йĕр хăварĕ
«Тракторострой», Шупашкар.

Эпĕ ирĕк,
телейлĕ каç-иршĕн
Кĕрешрĕм, туптантăм вутри çулсенче
Эпĕ — МИРШЕН...
КОМСОМОЛ, ятлă эп, Çĕр çинче!

Эппин, нацисем пĕр-пĕринпе сывхарса, тусла́шса, пĕр-пĕрин пурнăçне, культурине хăпартма пулăшни интернациллĕ аталанăвăн никĕсĕпе тĕрекĕ пулаймасть! Анчах та уйрăм нацисем хăйне уйрăм пулни никĕсре пулма пултаймасть-çке, мĕншĕн тесен вăл интернацилле, интернационалистла аталанмалăх тĕп вăй хатĕр мар.

Тата акă мĕне уйрăмах асăрхама тивĕçлĕ.

1970 çулта вырăс чĕлхине тăван чĕлхе вырăнне хурса йышăнакансен шучĕ çапла уйрăлса тăнă:

50 çула çитнисемпе унтан аслăраххисем	—3,1 проц.
20—49 çултисем	—8,5 проц.
19 çултан иртменнисем	—17,9 проц.

(Итоги Всесоюзной переписи населения. 1970 г., т. IV, 33 т. 322 стр.)

Эппин, ваттисем хушшинче амăш чĕлхине тăван чĕлхе тесе шутлакансем катăлманпа пĕрех. Шкул ачисем хушшинче вара вырăс чĕлхине тăвана хунисем чылай. Ку вăл мĕн çуралнăранпа вырăсла калаçма вĕренсе ўснĕ чăваш ачи-пăчисем йышланса пынинчен килет. Сăмахран, республикăри районсен центрĕсенче чылайăшĕ хăйсен ачисене тўрех вырăс шкулне яраççĕ.

Г. Н. Волков кăмăлĕ вĕççĕн шутлас пулсан ĕнтĕ, ку чухнехи çамрăк чăвашсем «чăн чăваш» хисепĕнчен тухса ўкеççĕ пулать, вĕсене чăвашлăха пăснăмăр, Геннадий Никандрович, мĕне пула, мĕн ĕмĕтпе-ха вара çынсене хăй кăмăлланă чĕлхене юратса, унпа калаçса пурăннăшăн çав тери хурламалла?! Чăваш чунлĕ, чăваш несĕплĕ çынăн хĕвринче çавнашкал хаярлăх, çавнашкал чăтăмсăрлăх, çын кăмăлне шарт хуçас курайманлăх епле шăнăçса тăрать-ши?..

Сăмах май В. И. Ленин калани аса килет: «Иной писатель соловьем разливается по вопросу о величии «принципа национальности» в его различных значениях и соотношениях, причем применяется этот «принцип» по большой части столь же удачно, как удачно и уместны были восклицания известного героя народной сказки: «таскать вам не перетаскать» при виде похоронной процессии». (ПСС, т. 30, сс. 349—350).

Паллах, Совет Союзĕнчи халăхсем паянăранах ассимиляциленсе, «çĕтсе» пырасси çинчен калаçмалли те çук. Коммунизм тăвас çул çинче вăл график тăрăх пулса пырас ĕç мар. Вăл хăйхаллĕн пулса пырать. Л. И. Брежнев ун çинчен нумай пулмасть çапла каларĕ:

«Пирĕн çĕршывра нацисемпе халăхсем пĕрпĕринпе малалла çывăхланни объективлă процесс пулса тăрать. Парти ăна ятарлăн хăвăртлатассине хирĕç тăрать,—ун пек туни кирлĕ мар, ку процесс пирĕн совет пурнăçĕн аталанăвĕ хушнипе пулса пырать. Çав вăхăтрах парти çапла шутлать: нацисем пĕр-пĕринпе çывăхланас процеса чарса тăма, пĕр е тепĕр сăлтавпа ăна чăрмантарма, нацисем хăйне уйрăм пулнине ятарлăн çирĕплетме хăтланни пачах пулмалла мар, мĕншĕн тесен ун пек туни пирĕн обществăн тĕп çул-йĕрне хирĕç, коммунистсен интернационалистла идеологине хирĕç, коммунизм тăвас ĕçĕн интересĕсене хирĕç пынă пулĕччĕ». (О 50-летии СССР. 1973, с.25).

В. И. Ленин пур нацисем пĕрлешесси пĕтĕм тĕнчипе коммунизм тунă хыççăн тин пуласса пĕлтерсе хунă. Хушăран каласан, çав майăн вăл çапла та каланă: пĕтĕм тĕнчери этем пĕр чĕлхепе калаçас патне çитесссĕн е акăлчансен, е вырăссен чĕлхипе калаçмалла пулĕ теннĕ. В. И. Ленин, эппин, ĕмĕр-ĕмĕрех пин е çĕр тĕрлĕ чĕлхе пулĕ тесе пĕр сăмах та каламан. Хĕвел сўнисенче чăваш чĕлхи пулмалла текен педагогсен Ленинăн çав шухăш-ĕмĕтне те асран вĕçертмелле мар пек-çке.

Паянхи саманара чăваш çыннисем ытти халăхсемпе пĕрле коммунизм тăваççĕ, ăçта пулсан та пĕр чĕлхепе калаçса, пĕр-пĕринпе лайăх ăнланса, шăкăл-шăкăл коллективла пурăннишĕн савăнатпăр. Чăвашсене вырăс чĕлхине аван пĕлтересшĕн тăрăшасси И. Я. Яковлев ĕçĕ-хĕлĕнчех уççăн палăрнă та, И. Я. Яковлев чăвашсем вырăсланнине те тиркемен те, мĕн ма-ха вара пирĕн ун ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕрсе пынишĕн пăшăрханмалла? Кулянас марччĕ, пурнăç юрттине чарасла хăтланас марччĕ!

ХĂЙСЕМ ТĔЛЛĔН ВĔРЕНСЕ

Ют çĕршыв чĕлхисене хăйсем тĕллĕн ăнăçлă вĕреннĕ çынсем хушшинче уйрăмах тăватă чăваш—Н. А. Андреев, В. Г. Егоров, Г. И. Ильин, И. М. Максимов палăрнă.

Н. А. Андреев 1912—1913 çулсенчех нимĕç чĕлхине тăрăшса вĕреннĕ, çакă ăна чĕлхе наукин çулĕ çине тухма пулăшнă. Тăван чĕлхене ют çĕршыв чĕлхисемпе танлаштарса тишкĕрни ăна чăваш чĕлхин тĕрлĕ ыйтăвĕсене тĕпчеме май панă, наукăпа интересленсе вăл тĕпчев ĕçĕсем нумай çырнă. Сăмахран, унăн «Чăваш чĕлхин стилистикипе» «Чăваш чĕлхин лексикологийĕ» кĕнекисемпе республикăри шкулсенче халĕ те усă кураççĕ. Унăн тĕпчев ĕçĕсем Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи Наукăпа тĕпчев институчĕ кăларса тăракан «Аслăлăх çырăвĕсем» кĕнекесенче те йышлă пичетленнĕ.

Н. А. Андреев тĕпчевçĕн ученăй степенĕ çук, çапах вăл тĕпчев ĕçне тухăçлă туса пырать. Вăл чĕлхеçĕ кăна мар—тăлмачă та. Нимĕç чĕлхине хăй тĕллĕн вĕренни ăна Г. Гетен «Фауст» трагедине нимĕçлерен чăвашла куçарма пулăшнă, унăн çак куçарăвĕ халĕ Демократиллĕ Германи Республикинче, нимĕç литературин Веймер хулинчи Тĕп библиотекинче, алçыру халлĕн упранать. Çак библиотекăн директорĕ Хеннинг хăй çырăвĕнче Н. А. Андреев куçарăвне нимĕçпе чăваш халăхĕсем хушшинчи туслăха çирĕплетес тĕлĕшпе тунă пархатарлă ĕç вырăнне хурса хаклать. Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. А. Андреев 77 çула çитсен Чăваш патшалăх университетне пĕтерчĕ, хăй тĕллĕн вĕренсе тунă çитĕнўсене университет дипломĕ илнипе çирĕплетрĕ. Нимĕç чĕлхине аван пĕлнĕрен вăл тĕрĕслев ĕçĕсене вăхăтра та тĕрĕс çырса тăратрĕ, программăра кăтартнă ĕçсене пĕтĕмĕшпех ăнăçлă туса пычĕ. Н. А. Андреев каланă тăрăх, ют çĕршыв чĕлхине вĕренме йывăр мар. Хăйĕн сăмахĕсене çак хастар çын ĕçпе çирĕплетет.

Ют çĕршыв чĕлхине хăй тĕллĕн вĕреннĕ çынсем чăвашра татах та нумай. Т. М. Матвеев, П. И. Иванов, Е. К. Кузьмин, Г. И. Комиссаров, Н. М. Митрофанов, А. А. Анисимов ют чĕлхесене хăйсем тĕллĕн вĕреннипех аслă шкулсене экзаменсем ăнăçлă тытса кĕнĕ. Каярахпа пурте вĕсем халăха вĕрентес ĕçре, наукăра палăрнă. Ют çĕршыв чĕлхисене пĕлни вĕсене тăван чĕлхене тĕпчеме пулăшнă.

Ют чĕлхесене вĕренме Шăмăршă салинче революцичченех кружок йĕркеленĕ. Ана çуллахи каникул вăхăтĕнче Хусан университечĕн медицина факультетĕнчи Г. И. Лукоянов студент ертсе пынă. Çак кружокра ытисемпе пĕрле И. Е. Егоров, П. Е. Крепков, М. С. Райков та çўренĕ. Вĕсем пурте каярахпа Чăваш çĕрĕнче Совет влаçне çирĕплетессишĕн хастар кĕрешнĕ.

Чăвашсен палăлă ученăйĕ В. Г. Егоров профессор та ют çĕршыв чĕлхисене хăй тĕллĕн ăса илнĕ. Вăл ытларах чĕлхесене пĕр-пĕринпе танлаштарса, словарьсемпе туллин усă курса тĕпченĕ. Каярахпа вăл хăй те чăвашла-вырăсла, вырăсла-чăвашла словарьсем хатĕрлесе кăларнă. Унăн «Чăваш чĕлхин этимологи словарьне» чикĕ леш енчи ученăйсем те хапăлласах йышăнчĕç.

Ют çĕршыв чĕлхисене хăй тĕллĕн вĕренсе наукăра пысăк çитĕнўсем тунă çынсем хушшинче И. М. Максимов математик те палăлă. Вăл çапла аса илет: «Эпĕ ют çĕршыв чĕлхисене математикăна тарăнрах пĕлес тесе вĕрентĕм. Ют çĕршыв чĕлхине тĕплĕн пĕлмесĕр чăн-чăн специалист пулма çуккине эпĕ часах ăнлантăм». Унăн шухăшĕпе, тĕпчевçĕн ют çĕршыв чĕлхисенче Францире, Германире е Англире пурăннă чух каласа кирлишĕн çеç мар, тĕпчев ĕçĕсене çав чĕлхесемпе вулама-çырма кирлишĕн вĕренмелле. И. М. Максимов виçĕ чĕлхепе—нимĕç, акăлчан тата француз чĕлхисемпе—математика ыйтăвĕсем тăрăх тĕпчев ĕçĕсем çырнă. Çав çĕршывсенче унăн вăтăр ытла ĕçне пичетленĕ.

Нимĕçпе француз чĕлхисене хăй тĕллĕн вĕреннĕ Г. И. Ильин каласа панă тăрăх, чăваш çамрăкĕсем П. И. Иванов, А. Е. Егоров, И. В. Чеботарев, И. А. Алексеев нимĕç чĕлхине хăйсем тĕллĕн вĕреннипех аван пĕлнĕ. Г. И. Ильин хăй вара, 60 çул хушши пĕр шкулта, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанаш ялĕнче ĕçлекенскер, нимĕç чĕлхипе вулать, каласать, çырать. Ватă учителĕн интересĕсем нумай енлĕ: вăл тĕрлĕ музыка инструменчĕсемпе калать, юрăсем кĕвĕлет, естествознани, физика, математика предмечĕсене аван пĕлет. Çамрăк чух вĕренекенсен хорне ертсе пынă. Г. И. Ильин вĕрентнĕ В. Д. Жучков паянхи кун республикăри учительсен пĕлĕвне ўстерекен институтра ют çĕршыв чĕлхисен кабинетне ертсе пырать. Вăл аса илнĕ тăрăх, унăн нимĕç чĕлхи учителĕ тĕрĕ тĕрлеме, ўкерчĕксем тума, юрлама юратнă. Ачасем ăна «пĕтĕм предмет учителĕ» тесе ят панă.

Ют çĕршыв чĕлхисене вĕреннĕ чухне чăваш ачисене И. Я. Яковлев просветителĕн ырă тĕслĕхĕ хаварлантарнă. Г. Н. Волков профессор çырнă тăрăх, И. Я. Яковлев гимназие вĕренме кĕричченех хăй тĕллĕн нимĕçле, французла вуланă, çырнă. Вăл акăлчанла, латиньле, грекла аван пĕлнĕ, Германири, Францири, Венгрири ученăйсемпе çыру çўретнĕ. И. Я. Яковлевăн çак пархатарлă тĕслĕхĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă учительсене пысăк усă кўнĕ. Ют çĕршыв чĕлхисене Ф. Т. Тимофеевпа (Тимухха Хветĕрĕпе) Е. З. Захаров та хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ.

Хăшпĕр чăваш ачисене, тĕслĕхрен, Н. М. Охотниковпа А. А. Адрианова, Владимир Ильич Ульянов гимназист ют чĕлхесене вĕренме нумай пулăшнă.

Юлашкинчен çакна каласшăн: вăй хумасан, тăрăшмасан, куллен ĕçлемесен ют чĕлхесене пĕлме май çук, çакна ют чĕлхесене хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ çынсен паха опычĕ лайăх кăтартать. Тĕрлĕ чĕлхеллĕ халăхсем хушшинчи çыхăнусем çултан-çул аталанса пыракан хальхи саманара ют çĕршыв чĕлхисене пĕлни пире халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетме, культурăпа наукăна малалла аталантарма, çамрăк ăрăва интернационалла воспитани пама хытă пулăшать.

В. ИВАНОВ,
педагогика наукисен кандидачĕ.